# ÇEÇПĚЛ САМАНЧĚ

Михаил СУНТАЛ

Библиотека. Çутă лампа. Юрату утравě пек курăнакан сěтел хушшинче çамрăк хěрарăм ларать. Вăл тем çырать.

"Ку çырăва сирěн пата мěн тума çырнине хам та пěлместěп, – темле тикěс мар йěрке кăларать ун алли. – Юлашки пултăр та йăлтах татăлса пěтерер шухăшпа-ши е эпě сире текех ěнтě тивěçлě мар тесе-ши? – Ăна хăвăрах чухласа илěр. Эсир халě ěнтě пысăк çын. Ыттисенни пекех манăн шăпа та сирěн алăрта пултăр тетěп-ши хамăн айван пуçăмпа? Кирек мěнле пулсан та мěн калас тенине ман каламаллах. Итлěр апла! Эпě сире тивěçлě хěрарăм мар. Иртнинче те эпě сирěн темěнле 250 тенкě пирки ыйтса çырса ятăм. Халě тин, çырăва илсе вуланă пулсан мěн тери мăнкăмăллă та хаяр хěрарăма юратса пăрахнине хăвăрах ăнланса илтěр пулě. Сирěн юратăвăр мана ним тума та кирлě мар. Ман упăшка тата тепěр юратнă çын пур, вěсемпе кăна пулас тесе пурăнатăп. Сирěнпе, сирěнпе пěрле пулма вара хал çитмест. Эсир мана юратса та мухтаса çырнисем тепěр чухне кулнă пекех туйăнаççě. Пěрле пулнă кашни самантшăн ÿкěнетěп халь. Хама хам çылăха кěнě хěрарăмăн, туслăха аркатаканăн туятăп. Хамăр туслăха чăнласах ěненетпěр-и-ха эпир? Çук пулě. Эсě килпетсěр йыш ачи, эсě пачах урăх тěнчерен тухнăскер, ман еннелле аллуна тăсатăн. Пěрмай хăвăн юратăву пирки кăна пуплетěн. Манăн, упăшкаллă хěрарăмăн, ăçта кайса кěмелле тет вара. Поэтăн вěри чунě никама та пырса тивмест тетěрим? Юрату вăл ача вăййи мар. Кунта ман тăвансем, юлташсем! Вěсене куçран мěнле пăхмалла тет вара ман сана чăнласах та юратса пăрахсассăн. Санăн юратăвунтан çавăнпа та питě хăратăп. Хăвна та ухмаха кăларас килмест. Эсě кун пек ячěшěн çеç калаçкаласа пурăннипе килěшес çук. Тем тесен те, енчен те эпир ку туслăхран та ытла пулса кайнă çыхăнăва татайманасан – кěтсех тăр – мěнле те пулин трагеди патне килсе тухăпăр. Çавăнпа та, çирěплетсех калатăп, тек сирěн çине пăхас çук. Манпа ěмěрлěхех пěрле пулас тенине татăклăн сирсе яратăп. Пěрле пулни чăнах та питě хăрушă пулнă пулěччě. Эсир кăна хăвăр та ăнланатăр. Эпě мěн чухлě лайăх пултăр тесе тăрăшрăм, анчах ку сире асап кăна кÿчě. Тек ун пек пулмě. Çавăнпа та библиотекăна тата унпа çыхăннă япаласене пěтěмпех мансан мěн тери аван пулмалла. Вăт, вăт, хăвăр та çапла çырнăччě: "Библиотека... кěнекесем... Эсир манăн чи хаклă çыннăм, сěтел хушшинче ларатăр, шурă хута хуратататăр... Темшěн-çке мана урăхрах сире нихçан та, нихçан та курас маррăн туйăнать". Çапла пултăр та! Эпě сире çынна нихçан каламаннине каларăм, ку ачана кăштах чун кěтěр, кăштах чунě уçăлтăр терěм. Шеллерěм! Халь ÿкěнетěп. Çăмăллăх мар, йывăрлăх кăна кÿтěм. Çитет. Тек ан çырăр. Чăтăмлăхăм пěр вěççěр мар. Тек ним те ан ыйтăр. Хутте мěн шырасан та ман çумра ним те тупаймăр. Хăвăра кăмăлласа хăлхаран туртнине те манса кайăр. Тěл пулас пулсан та, ас тăвăр, тÿрех касса тататăп. Курайман, юратман çынсене хам çумран эпě яланах çапла сиретěп. Тек çуртăм умěнче çаврăнкаласа çÿренě ан пултăр, Теччěне килес-тăвас пулсан библиотекăна та пынă ан пултăр. Тупăннă, шутсăрах илемлě çын! Эсир вěт, ěлěкхине аса илсе калатăп, хăвăра хитрисен шутне кěртетěр. Поэт тетěр ěнтě. Пěлсемěр: эпě поэтсене те, вěсем çырнă сăвăсене те юратмастăп. Эсир поэт тесе ман чысăм-ятăма вараласшăн-и-ха? Йěркене пăсасшăн-и-ха? Тен, сěннě туслăхпа килěшнě те пулăттăм. Анчах та эсир ытлашши ан ыйтăр. Халě те малтанах чарманшăн хама хам вăрçатăп. Мěн тесе вара санпа вăрманта уçăлса çÿрерěмěр. Атăлта ярăнтăмăр... Мěн усси?! Пěрех пěрле пулас çук. Сана хам çума çывхартнăшăн калама çук ÿкěнетěп. Хěллехи çав каçа, тархасшăн, Турă умěнче кěлě тăватăп, манса кайăр. Нимле ырă самант та мар, çылăх пулчě вăл. Ан килěр, тек ан килěр ман пата, унсăрăн... Унсăрăн мěн пулассине эпě те пěлместěп. Йăлт манса кайсан тен çăлăнса юлăпăр-и, ăна та пěлместěп. Манăр, манăр, тархасшăн. Людовиг рощине те, хапха тăрринчи Алтăр çăлтăрě та... Çěн çул умěнхи каçа та... Эпě ун чухне чăнласах та шап-шур тутăр çыхнăччě...

Ку юлашки çыру пултăр тетěп, çавăнпа çыратăп. Мана санăн килпетсěр юратăву кирлě мар!.."

Çапла темле кукăр-макăр çырса хунă сăмахсем хыççăн тем пулчě – хěрарăм хăйěн çырăвне чарр! çеç çурса пăрахрě. Икке пайланнă хут таткисем урайне кěрхи çулçăсем евěр ярăнса ÿкрěç. Пěр самант ним хускалмасăр ларнă хыççăн сěтел çинче выртакан пěр татăк хут çине Нуся "Эпě сана юрататăп, Миша" тесе çырса хучě те конверт ăшне чикрě, адресне çырчě.

Библиотекăра пěр вăхăт шăп тăчě. Унтан, çутă сÿннě хыççăн, алăк чěриклетсе уçăлса хупăнни, ура айěнчи çурхи юр кăчăртатни илтěнчě. Пěр вăхăт пуçне усса утакан хěрарăм сасартăк тăп чарăнса тăчě. Пуçне çěклесе пăхрě те хапха тăрринчи Алтăр çăлтăра курах кайрě.